Ял хуçалăх ĕçченĕсем

# «Аттесен ĕçне малалла тăсатпăр»

Çуркуннен пĕрремĕш сăнĕсем палăрсан тĕл пултăм эпĕ хам унччченех палланă, анчах чылай хушă курнăçман пĕлĕшĕмпе. Халăх хушшинче яланах ырă та çепĕç кăмăлĕпе, шаннă ĕç çине ответлăха туйса пăхнипе, умри тĕллевсене çиччĕ виççе хак панипе уйрăлса тăрать ыттисенчен Володя. Уйрăлса тăрать, анчах пурнăçра хăй суйласа илнĕ çулпа çирĕппĕн те шанчăклăн малалла утать.



…Юлташăмпа ăшă пӳлĕмре калаçса ларатпăр, анчах урамра çурхи хĕвел вылянине куракан çамрăк арçын куçĕсене чӳречерен тартмасть.

– Хĕвелĕ пăхать-ха та, ăшши хĕл сиввисене хăвалаÇа яраймасть. Мĕн «парнелерĕç-ши» вĕсем кăçал пире? Хам Муркашра пулсан та чунăм утартах, – кăмăллăн сăмах пуçларĕ Ленин ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн Шаптак уйрăмĕн утарçи Владимир Лукич Иванов.

Пĕрремĕш кун мар пĕлетĕп эпĕ çак ĕçчене, анчах паян унпа калаçсан утарçă ĕçĕ çине татах та ответлăрах пăхма пуçларăм.

Володя пĕр кунта утарçă пулса тăман. «Турă çырни çапла пулчĕ пуль», – тет ытти чух сăмах ваклама юратсах кайман, анчах хăй патне пыракан çынпа кăмăллă калаçакан арçын. Çак сăмахсем хыçĕнче унăн тата аслă тăванĕсен пурнăçĕ тăрать.

– Мĕнрен пуçланнă-ха хурт-хăмăр патне выртакан санăн çулу? – кăсăкланатăп май килнипе усă курса.

– Тĕрĕссипе каласан, манăн çул мар вăл – пирĕн несĕлсен çулĕ. Атте каласа панă тăрăх, манăн тăванăмсем хушшинче утар ĕçне аттен шăллĕ Сергей Иванович Иванов пуçарса янă. Хăйĕн пурнăçне Турă кайăкĕсемпе çыхăнтарнăскер, çине тăрсах утарçăна вĕренсе тухать. Пуçламăш пĕлӳ илсе вăл Шаптак уйрăмĕнчи утарта ĕçлеме пуçлать. Ял çыннисене тутлă пылпа та хăватлă пыл сăрипе сахал сăйланă-и пичче!

– Çĕнĕ ĕçе кӳлĕннĕскер, манăн аттене те утарçă ĕçне туртса кĕрсе каять. «Шеллемерĕм шăллăм хыççăн кайса», – тетчĕ кайранхи вăхăтсенче атте пире те хурт-хăмăр пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен юмах-халапсем каласа панă май, – аса илет юлташăм. Канмалли вăхăтсенче ашшĕпе хăйĕн пиччĕшĕсем вĕллесем ăсталанине паян та лайăх астăвать Владимир Лукич.

– Кашни шитне-сантиметрне шута илетчĕç вĕсем. Вĕсене курах ĕнтĕ эпĕ те хам мĕн астăвассах вĕлле хурчĕсем патĕнче. Вĕлле çӳллĕш ӳссенех мана утара илсе кайнă пулас, – йăл кулă парнелесе калаçать иртнĕ çул районти экономика ăмăртăвĕнче малтисен ретĕнче пулма хевте çитернĕ В. Иванов.

Ивановсен çемйинче 5 ача. Володя – кĕçĕнни. Кăшт вăхăт иртсен Сергей Иванович утар ĕçĕпе Шаптакран Платкассине куçать, пĕрле ĕçлеме Платкасси каччине Семен Дмитриевич Родионова илет. Хăватлăраххăн пуçланса каять вара çĕнĕ ĕç вырăнĕнчи утар ĕçĕ-хĕлĕ мал туртăмлă арçынсен аллинче.

Ырă ĕç вăл ăруран ăрăва куçнипе палăрса тăрать. Ивановсен те çапла пулса тухать. 1976 çулта Володьăн аппăшĕ Юля Вăрнартан утарçăна вĕренсе тухать те М. Романовпа пĕрле Шаптакри утарта ĕçлеме, илнĕ пĕлĕве пурнăçа кĕртме пуçлать.

Ĕçлекенрен ĕç хăрать. 1977 çулта утарпа пĕтĕмпех Юля ĕçлеме тытăнать. Зоотехника вĕренме кайиччченех тимлет вăл çак ĕçре. Ку вăхăтра Шаптак утарĕпе пĕр интереслĕ истори те пулса иртет. 70-мĕш çулсем вĕçĕнче ял хуçалăхĕнче ăнăçлă ĕçленĕшĕн Ленин ячĕпе хисепленекен хуçалăха республикăран куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялав параççĕ. Ялав хуçалăха каç сĕмĕпе çитнĕрен тата кантур хупă пулнăран, ăна хуçалăха пама шанса янă çынсем Хĕрлĕ Ялава Юльăн килне упрама кĕртсе хураççĕ. Çакнашкал пысăк парне утарçă килĕнче çĕр выртнине Володя паян кăмăллăн аса илет. Вăл-çке – çемье историйĕ.

Юля зоотехника вĕренме кайсан, унăн ĕçне ашшĕпе амăшĕ сӳнме памасăр малалла тăсаççĕ. 1985 çулхи çу уйăхĕн 10-мĕшĕнче Совет Çарĕнчен службăран таврăннă Володя ашшĕ-амăшне пулăшмалла тӳрех утарçă ĕçне кӳлĕнет. Тăрăшулăхран пăрăнманскер, ĕçпех ырă ята тивĕçет: 1986 çулта районти Хисеп хăми çине тухать.

– Атте-анне ĕçне сӳнме памарăмăр. Паян утарта мана Зинаида Геннадьевна мăшăрăмпа пысăк çемьери 5 ачам пулăшаççĕ, хавхалантарса пыраççĕ. Нихăшĕ те вĕлле хуртĕнчен, утар ĕçĕнчен сивĕнни пулман, – лăпкăн каласа парать Владимир Лукич Иванов утарçă хуçалăх утарне ертсе пынă хушăрах 1994-2008 çулсенче Шупашкарти вăрман хуçалăхĕн Тойкилтĕ çывăхĕнче вырнаçнă утарне те ĕçлеттернине пĕлтерсе.

В. Иванов иртнĕ çул утарти пыл хурчĕсен çемйисене пĕтĕмпех сыхласа хăварнă. Иртнĕ çу кунĕсенче тăрăшуллă утарçă çемье членĕсем пулăшнипе вĕлле хурчĕн пĕр çемйи пуçне 17 килограмм таварлăх пыл илсе пĕтĕмĕшле кăтартăва 1275 килограма çитернĕ. Çĕр ĕçченĕн паттăрлăхĕ мар-и-ха ку! Çакна шута илсе ĕнтĕ Владимир Лукич Иванова пĕлтĕрхи ĕç кăтартăвĕсемпе район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕпе «2009 çулхи чи лайăх хурт-хăмăр пăхакан» ят панă.

**Анатолий БЕЛОВ.**

Район прокуратуринче

# Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре

***Паянхи рубрикăна Муркаш район прокурорĕн пулăшаканĕ, 3-мĕш класлă юрист Екатерина Николаевна КУЗЬМИНА ертсе пырать***

## Çитменлĕхсем палăрчĕç

**Таварсене муниципаллă тата патшалăх ĕçĕ-хĕлĕ валли туяннă чух Муркаш район администрацийĕ саккунсене пăхăнать-и?**

**С. ВАСИЛЬЕВ.**

Район прокуратури хăйĕн ĕçĕнче ку ыйтăва та иккĕмĕш вырăна хăвармасть. Нумай пулмасть çак енпе иртнтернĕ тĕрĕслев те çитменлĕхсене тупса палăртрĕ. Çапла вара Муркаш район администрацийĕ муниципаллă тата патшалăх ĕçĕ-хĕлĕ валли таварсем туяннă чух саккунсене епле пăхăннине тĕрĕслесен, 2009 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнче «Дорис-Нефтепродукт» чикĕллĕ яваплăхлă обществăпа сĕрмелли-çунтармалли материалсем туянма тунă муниципаллă контракт федераллă саккунпа килĕшсе тăманни палăрчĕ.

Кăшт маларах ирттернĕ çакăн евĕр тĕрĕслевре кунашкал çитменлĕхсем пулни пирки пĕлтернĕччĕ. Тĕслĕхрен, 2009 çулхи декабрĕн 23-мĕшĕнче сентябрĕн 30-мĕшĕнче «Дорис-Нефтепродукт» чикĕллĕ яваплăхлă обществăпа тунă муниципаллă контрактри çитменлĕхсем пирки район администрацине представлени тăратнăччĕ. Анчах ответлă ĕçченсем тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ туманни курăнать.

Тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕсемпе район прокурорĕ Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ ячĕпе çитменлĕхсене пĕтерме тата яваплисене дисциплинарлă ответ тыттарма представлени тăратрĕ.

Сывă пурнăç йĕрки

# Çемьери спорт туслăхĕ

Кирек-хăш тапхăра пăхсассăн та тасалăхпа тăрăшулăхшăн, ĕçченлĕхпе сывă пурнăç йĕркишĕн, тавракурăм аталанăвĕшĕн тăрăшакансем çĕнтернĕ. Вĕсем сывлăхне упраса хăварса пĕрле ӳснĕ тантăшĕсенчен ытларах пурăнма, нумайрах ĕçлеме, хăйсем хыççăн ырă ят хăварма мехел те çитернĕ.




Асаттесемпе асаннесем пурнăç çулĕ çине тимлĕрех пăхни, çакна эпир ăнланса илни юлашки çулсенче пирĕн вăхăтра пурăнакансене те сывă пурнăç çулĕ çине туртăнма «хăвалать». Ярапай ял тăрăхĕнчи Иштерек ялĕнче пурăнакан Барановсем çапла тăваççĕ те!

Спортпа туслă çак çемье пирки тата вĕсен ӳсĕмĕсем çинчен пĕрре мар илтнĕ, анчах… Кăçалхи нарăс уйăхĕн 27-мĕшĕнче Калайкассинчи А. Г. Николаев ячĕллĕ вăтам шкулта хĕллехи полиатлон енĕпе (йĕлтĕрпе чупасси, пăшалтан тĕл пересси, турник çинче туртăнасси) иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче çамрăклах Чăваш Республикин чемпионĕн ятне тивĕçнĕ хамăрăн ентешĕмĕре Юрий Иванович Федотова чысласа ирттернĕ турнирта йĕлтĕр йĕрĕ çине пĕр çын пек тухнă çак çемьепе çывăхарах паллашрăм.

Ялта пурăнакан ытти вуншар çемьерен нимĕнпе те уйрăлса тăман çемье. Кăна çиелтен пăхсан çеç çапла калама пулать. Вĕсен пурнăç çул-йĕрне пăхсан вара... Барановсем – хăйсен çемье пурнăçне спорта халалланă çынсем. Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Артемпа Антон йĕкĕрешсем те (7 класра вĕренеççĕ), 9-мĕш класа çӳрекен Джамилия та, Калайкасси шкулĕнче 10-мĕш çул ачасене ют çĕршыв чĕлхи вĕрентекен Лариса Вениаминовна та, пĕрремĕш çул мар предприниматель ĕçне туса пыракан Эдуард Иванович та çак кун йĕлтĕр йĕрĕ çинче чăн-чăн паттăрлăх кăтартрĕç.

– Сывă пурнăç йĕрки – пирĕнтен кашниншĕн уйрăлми пай. Çапла пулнă, пур, пулĕ те. Килте юлнă 2 çулти Даша та вăхăт çитсен пирĕнпе пĕрле ăмăртусене тухĕ, – терĕ малашлăха шанакан çемье пуçĕ Э. Баранов.

Çапла пултăрччĕ!

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Конкурс-викторина

# Çĕр ывăлĕ, хĕвел ачи – К.В. Иванов

Чăваш юрри-сăввин кĕрнеклĕ ăсти Константин Васильевич Иванов çуралнăранпа 120 çул çитнине çу уйăхĕнче пур чăваш та анлă паллă тăвĕ. Муркашри тĕп библиотека çамрăк ăрăва К. Ивановăн пурнăçĕпе таранрах паллаштарас тĕллевпе 6-11 классенче вĕренекенсем валли ятарлă конкурс-викторина хатĕрлерĕ. Хуравсене ака уйăхĕн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Çĕнтерӳçĕсене ака уйăхĕн 23-мĕшĕнче Муркашри Культура çуртĕнче чысласçĕ. Конкурс-викторинăна хутшăнакансен хăйсен ячĕпе хушаматне, ашшĕ ятне, çулне, пурăнакан вырăнне, хăш шкулта тата класра вĕреннине кăтартса ĕçсене Муркашри тĕп библиотекăна çитерсе памалла.



1. Чăваш поэзийĕн классикĕ К. Иванов хăçан тата ăçта çуралнă?
2. Раççей империйĕнчи чăвашсем валли семинари йĕркипе ĕçлекен пĕртен-пĕр вĕрентӳ çурчĕ? Унта К. Иванов малтан шкул ачи пулнă, кайран вĕрентӳçе тухнă.
3. К. Иванова хăçан, ăçта тата мĕншĕн «кашкăр хучĕ» тыттарнă?
4. К. Иванов çырнă сăвăллă юмах-халапсем?
5. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ уçăлнăранпа 40 çул çитнине халалласа К. Иванов мĕнле хайлав çырнă?
6. Миçемĕш çулта К. Иванов халăх учителĕн ятне илме экстерн йĕркипе экзамен тытать?
7. К. Иванов йăхĕ камран пуçланса кайнă?
8. Çак йĕркесене чăваш поэчĕн Ухсай Яккăвĕн хăш хайлавĕнчен илнĕ:

«Мухтавлă йывăçа кам
манĕ?
Пуç тайрĕ халăх кăмăлтан.
Йĕкелсенчен юман вăрманĕ
Хăпарчĕ пĕлĕтсем таран...»

9. Ивановсен çемйинче миçе ача пулнă?
10. К. Ивановăн кĕçĕн шăллĕ мĕн ятлă пулнă?
11. К. Иванов Пелепейри 4 креслă училищĕн 1 класĕнче вĕренни çинчен калакан свидетельство номерĕ?
12. К. Ивановăн çывăх тусĕ?
13. «И.Я. Яковлевпа К.В. Иванов» ӳкерчĕк авторĕ?
14. К. Иванов ӳкерчĕкĕсем?
15. К. Ивановăн «Нарспи» поэми тăрăх тунă иллюстрацисен авторĕсем?
16. К. Ивановăн «Нарспи» поэми пĕрремĕш хут хăçан тата ăçта пичетленсе тухнă?
17. «Нарспи» поэмăна кам тата хăçан чи малтан вырăсла куçарнă?
18. «Нарспи» поэмăра мĕнле халăх уявĕсене çырса кăтартнă?
19. Çак йĕркесене К. Ивановăн хăш хайлавĕнчен илнĕши:

«Вăйĕ пĕтсе çитнипе
Унăн чĕлхи чарăнчĕ.
Куçĕсемпе анчах вăл
Çӳле пăхса кĕлтăвать».

20. Çак йĕркесенче мĕнле йăнăшсем пур:

«Сетнер канлĕ çывăрать
Çӳллĕ йăмра айĕнче,
Нарспи ларать тĕлĕрсе
Сетнер пуçĕ вĕçĕнче».

21. И. Максимов-Кошкинскин К. Иванов пултарулăхĕ çинчен çырнă хайлавĕ?
22. Шупашкарти К. Иванов палăкĕсен авторĕсем?
23. К. Иванов çинчен мĕнле документаллă фильмсем ӳкернĕ?
24. Пĕрремĕш «Нарспи» оперăн авторĕ кам? Хăçан çырнă?
25. Чăваш Республики ĕçри хастарлăхпа палăрнă çынсене хăш çултан пуçласа К. Иванов ячĕпе хисепленекен патшалăх премине парса чыслать?
26. «Силпи çăл куçĕсем» поэзи фестивальне кам, хăçан тата ăçта йĕркелесе иртернĕ?
27. К. Ивановăн «Çырнисен пуххи» кĕнекен пĕрремĕш кăларăмĕ миçемĕш çулта пичетленсе тухнă?

01 Çырни патне таврăнса

# Инкек калăпăшĕ ӳсрĕ

Вут-кăварăн алли вăрăм тенипе эпир час-часах куçа-куçăн тĕл пулатпăр, анчах нихăшĕнче те тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тума васкамастпăр. Кайран вара, чавса çывăх та – çыртма çук. Çакнашкал ӳкерчĕк ку хутĕнче Ильинка ял тăрăхĕнчи Апчар ялĕнче пулса иртрĕ. Ирĕке кайнă вут-çулăм шелсĕр. Вăл туххăмрах хăй хыççăн шĕл кăвар хăварса пурăнмалли çурт-йĕре, хушма хуралтăсене, пурлăха «илсе тухса» каять. Унран та ытларах инкек вăл – пушарта çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлни. Апла пулин те...

Пуш уйăхĕн 18-мĕшĕнче 21 сехет тĕлĕнче Апчарта пĕр пурăнмалли килçуртра пушар тухни пирки райхаçатра пĕлтернĕччĕ. Пушарнăйсем вырăна çитнĕ çĕре 1940 çулта çуралнă В. Павлова хуçалăхĕн пӳрчĕ талккишпех çулăм тыткăнĕнче пулнă. Оперативлă ĕçленĕ пушарнăйсем «хĕрлĕ автана» ытти хуралтăсем çине куçма памарĕç. Çапах та...

Пушара сӳнтернĕ хыççăн вут-çулăмпа кĕрешекенсем пӳртрен арçыннăн кăмрăкланнă кĕлеткине илсе тухрĕç. (Пĕлтĕр çак кунччен пулнă 8 пушарта пĕр çын пурнăçĕ те татăлманччĕ пулсан, ку вăл кăçалхи 9-мĕш пушарти пĕрремĕш çухату пулчĕ).

Пушарта кĕлленнĕ çуртăн юлашкисене иртнĕ чух пуш уйăхĕн 23-мĕшĕнче асăннă инкекре тепĕр арçын вилли тупăнчĕ.

Ку инкек тĕлĕшпе халĕ анлă следстви пырать.

**Л. ДАВЛЕТШИН,**
**прокуратура çумĕнчи следстви комитечĕн следователĕ.**

Ыран – кулăш кунĕ

Экзамен вăхăтĕнче профессор студентран ыйтать:

– Мĕншĕн хумханатăр? Манăн ыйтусенчен хăратăр-и?

– Çук, профессор! Хамăн хуравсенчен шикленетĕп.

* * *

Иванов студент экзамен тытнă хыççăн автобуса кĕрсе ларать те билет илет. Унăн номерне хыттăн каланă хыççăн шухăша каять. Кăштахран вăл кондуктортан çапла ыйтать:

– Тепĕр билет илме юрать-и?

* * *

Студент преподавательсен пӳлĕмне кĕрет те питĕ мĕскĕннĕн:

– Ырă çыннăмăрсем, чăрмантарнăшăн каçарăр. Эпĕ кунти çын мар. Вокзалта зачеткăна вăрларĕç, унта манăн пĕтĕм оценкăччĕ. Хĕрхенĕр-ха мана, кам мĕн чухлĕ пултарать – лартса парăр.